**Хӗллехи илем**

Вăш-вăш, вăш-вăш, ай, çил вӗрет.

Каш-каш, каш-каш вăрман кашлать,

Шап-шур сухаллă хӗл мучи

Питрен-куçран ай хыпашлать.

Ух!

Çил ачисем сиккипеле

Кӗртсем тăрăх чупкалаççӗ.

Мӗнпур хăрăк туратсене

Турта-турта хуçкалаççӗ.

Шарт!

Армак-чармак вată юман

Шухă çилпе ай тавлашать,

Чӗрик-чӗрик чӗриклетсе

Аллисемпе сулкалашать.

Ух!

Ешӗл тумтирлӗ чăрăшӗ

Вăш-вăш çилпе авкаланать,

Шап-шур пӗркенчӗк юр çине

Кӗмӗл укçа ай сапалать.

Их!

Тулли уйăх пӗлӗт çине

Хуллен-хуллен шуса тухать.

Лăпкă-лăпкă ялсем çине

Ылтăн-кӗмӗл пӗрчи такать.

Эх!

1939

*Тукташ, И. Хӗллехи илем / И. Тукташ // Чăваш сăмахлăхӗ : 10-мӗш класăн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 223.*